# Янра, тăван чĕлхем!

## *(Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхесен кунне халалланă уяв сценарийĕ)*

**А.И. ПОРТНОВА**, *Елчĕк районĕнчи Кушкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен*

***Тĕллевĕ:*** ĕмĕрсем хушши аталанса пынă чăваш чĕлхи пуянлăхĕпе паллаштарасси, илемлĕ вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси, халăх умĕнче харпăр хăйне тытма вĕрентесси, тăван чĕлхепе ирĕккĕн калаçма хăнăхтарса ун хăватне туйтарса илтересси, малалла аталантарма хавхалантарасси.

### Уяв йĕрки

Уяв алăк умĕнчех пуçланать.
Хăнасене капăр чăваш тумĕ тăхăннă хĕрпе каччă кĕтсе илеççĕ.

К а ч ч ă. Ырă кун пултăр, хисеплĕ вĕрентекенсем тата хăнасем!

Х ĕ р.

Салам сире, тав сире!
Алăк уçсан курăнатра,
Тирпейлĕ-йĕркеллĕ пурăнатра,
Пирĕн уява килетре,
Учителĕ пур, ачи пур,
Ватти пур, çамрăкки пур,
Килен пур, каян пур,
Килĕр пирĕн уява!

К а ч ч ă.

Хăнасене салам! Тăвансене салам!
Умăрта тăрса пуçăма таям!
Аллăмра курка, куркара сим пыл,
Пуç таяр пурте çăкăр-тăвара!
Ятлă тăвансем, хаклă тусăмсем,
Чăн, сире курсан савăнать чĕрем!

Хĕр çăкăр-тăварпа хăнасен умне пырса пуç таять, çăкăрне тутантарать.

Х ĕ р. Уяв ячĕпе сире çирĕп сывлăх, ырă шанăç, ĕçре ăнăçусем, хаваслă кăмăл-туйăм, телей тата ырлăх сунатпăр.

К а ч ч ă. Уяв пуçланиччен малтан пĕрремĕш хутра салтăнатпăр, кайран вара пурне те иккĕмĕш хутра вырнаçнă чăваш чĕлхипе литература кабинетне кĕме йыхравлатпăр.

Х ĕ р. Уяв тухăçлă та усăллă пуласса шанатпăр. Тăван сăмах хăватне туйса илсе ун илемĕпе савăнма сире ăнăçу сунатпăр.

Кабинета тĕрлĕ тĕслĕ шарсемпе илемлетнĕ, кĕнеке куравĕ йĕркеленĕ.
Доска çинче – чăвашлăх пирки каланă сăмахсем, плакатсем.
Тĕрлĕ халăх ачисем (чăваш, вырăс, тутар) тухаççĕ.

Ч ă в а ш. Ырă кун пултăр, хаклă хăнасем!

В ы р ă с. Добрый день, дорогие наши гости!

Т у т а р. Исэнмесез!

Ч ă в а ш.

Мĕнле телей тăван чĕлхем пурри!
Мĕн ĕмĕрлĕх анне пире пӳрни.
Чĕрем юрри, çут пурнăçăн юрри,
Тĕнчемĕре ун пилĕпе курни.

В ы р ă с.

Чувашия, о край ста тысяч песен!
Не зря в тебя поэты влюблены,
Ты жизнь моя, тревога, озаренье,
Ты Родина любимая моя!

Т у т а р.

И туган тел, и матур тел, әткәм-әнкәмнең теле!
Дөньяда күп нәрсә белдем син туган тел аркылы.
Иң элек бу тел белән әнкәм бишектә көйләгән,
Аннары төннәр буе әбкәм хикәят сөйләгән.

В ĕ р е н т е к е н. Хаклă хăнасем, хисеплĕ ĕçтешсем! Йышăнса илсемĕр пирĕнтен хĕрӳллĕ салам! ЮНЕСКО пуçарăвĕпе нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери халăхсен тăван чĕлхе кунне паллă тăваççĕ. Эпир те Тăван чĕлхе кунне халалланă уява пуçтарăнтăмăр. Чĕлхе вăл – халăх культурине упраса пыма пулăшакан хатĕр, чи хаклă тупра. Халĕ çакна çирĕплетме пĕр пĕчĕк сценка лартса паратпăр.

### «Аслашшĕпе мăнукĕ» сценка

Вăтă мучи çăпата хуçса ларать. Урамран мăнукĕ чупса кĕрет.

М ă н у к. Асатте, эсĕ нумай çул пурăннă. Çĕр çинче чылай чĕлхе пур теççĕ. Кала-ха тархасшăн, эсĕ хăшне ытларах юрататăн?

А с а т т е. Ачам, эпĕ пур чĕлхене те кăмăллатăп, анчах чи юратни – тăван чĕлхе.

М ă н у к. Чи илемли вара хăшĕ-ши? Манăн пиĕ пĕлес килет.

А с а т т е. Чи илемли те, мăнукăм, – тăван чĕлхе.

М ă н у к. Чи пуянни вара?

А с а т т е. Чи пуянни те маншăн тăван чĕлхех шутланать.

М ă н у к. Мĕнпе пуян вара вăл?

А с а т т е. Мăнукăм, ку ыйту хуравне тупма пире шкул ачисем пулăшĕç.

1 - м ĕ ш а ч а.

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Эс – чи пахи, эс – чун уççи.

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Пин чĕлхерен чи çепĕççи.

2-мĕш ача.

Çак чĕлхепе эп калаçатăп,
Куллен çыратăп та вулатăп,
Çак чĕлхепе эп мухтанатăп,
Куллен-кунах ăса туптатăп.

3-мĕш ача.

Тăван чĕлхе, тăван сăмах,
Сана упратăп чĕремрех.
Анне чĕлхи, атте чĕлхи,
Мана вăй кÿрĕн яланах.

4-мĕш ача.

Тăван чĕлхе – таса çăлкуç,
Тăван чĕлхе – телей шевли.
Тăван чĕлхе çĕн алăк уçĕ
Куллен-кунах пире валли.

5-мĕш ача.

Савар, мухтар чĕлхемĕре,
Чун-чĕрери хĕлхемĕре.
Унпа эпир ялан çĕнтернĕ,
Çĕр-шыв ятне çÿле çĕкленĕ.

Вĕрентекен. Хаклă хăнасем, халĕ пирĕн ачасем сире пин чĕлхерен чи çепĕççипе, тăван чĕлхепе, юрă шăрантарса парĕç. Хыççăнах шÿтлĕ сценка пулĕ.

Юрă саламĕ.

### «Шили-пили» сценка

Марине амăшĕ – Кулине – пукан çинче чăлха çыхса ларать. Ун тавра Марине явăнса çÿрет.

Марине. Анне, юмах каласа парсамччĕ.

Кулине. Не «анне», а – «мама».

Марине. Ну, «мама» пултăр… Мама, юмах каласа пар-ха! Ялта асанне пит нумай юмах каласа пачĕ мана. Эх, юмахĕсем пĕри тепринчен асамлăрах!

Кулине (*тарăхса*). Твой асанне, кокта я поету теревню выковор получит.

Марине (*тĕлĕнсе*). Мĕншĕн?

Кулине. Тебе по-чувашски портилшăн.

Марине. Мана асанне чăвашла калаçма вĕрентнĕшĕн ăна ма вăрçмалла? Анне, юмах каласа пар-ха. (*Амăшĕ çумне ларать.*) Каласа пар-ха ĕнтĕ, анне?

Кулине. Шили-пили папка та тет.

Марине (*ăнланмасăр, хăй тĕллĕн*). Шили? А мĕн çĕленĕ вара вĕсем?

Кулине. Не çĕленĕ, а шили, понимаешь, ш-ш-шили. (*Аллинчи çăмхине урайне перет.*) Ты после теревни ненормальный стала, что ли?! Ничего не понимаешь. Переключай свой моск на русский.

Марине (*ĕнсине хыçкаласа*). Мĕн çĕленĕ вара вĕсем? Кĕрĕк-и, тăлăп-и, çĕлĕк-и е шлепке-и?

Кулине (*тарăхса*). Ни шлепке, ни тулуп. А просто шили.

Марине. Ан çиллен, анне. Асанне мана хулана кайсан аçу-аннÿпе чăвашла калаç терĕ.

Кулине. Слушай хорошо, тогда поймешь. Шили-пили папка та тет.

Марине (*хăй тĕллĕн*). Мĕн пулма пултарать-ши ку тет тени? Асанне юмахĕнче тет сăмах нумайччĕ-ха…

Кулине. У асанни тет – трукой: а у меня тет – совсем трукой. У меня тет старик. Поняла?

Марине (*хавассăн*). Тинех ăнлантăм: тет – старик, папка – бабка!

Кулине (*хĕрне çурăмĕнчен лăпкаса*). Ма-ла-тес!

Марине (*тата хаваслăрах*). Шили-пили тени вăл санăн жили-были тени пулĕ-ха?

Кулине (*хĕрне хăй çумне пăчăртаса*). Наконец-то, твойне ма-ла-тес! Лар-ха, лар. Малалла итле.

Марине (*алăк патне чупса каять*). Урăх итлеместĕп ку юмаха! Ытла ăнланмалла мар. Ăна итличчен урама тухса ачасемпе вылятăп. Юмахне каличчен малтан, анне, эс вырăсла лайăхрах вĕрен-ха. Унсăрăн эп сана ăнланмастăп, эс –мана! Мĕнле пурăнмалла?

Вĕрентекен. Вырăсла пĕлни – пысăк ырлăх, пысăк çитĕнÿ. Анчах вăл пирĕн чăваш чĕлхине тата Раççейри халăхсен чĕлхисене хупламасть, пурнăçран хĕссе кăлармасть. Вĕсем кашниех кирлĕ те паха.

Юрă саламĕ.

1-мĕш ача.

Чăвашсем, чăвашла калаççамăр,
Ан именĕр чăваш пулнăран.
Чăвашсем, чăвашла юрласамăр.
Ан писсемĕр тăван халăхран.

Вĕрентекен.

Вĕçĕ-хĕррисĕр
Раççей çĕрĕнче
Миçе пин юхан шыв юхать-ши?
Шăнкăр-шăнкăр шывсем хушшинче
Чи илемлĕ сасли хăшĕ-ши?

2-мĕш ача.

Хăшĕ-ши, кам пĕлмест-ши çакна:
Кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи.
Вăл илет те пĕрре тыткăна…
Çак вара – чи ырри, лайăххи!

Чи мала Асатте тата Мăнук тухаççĕ.

Мăнук. Асатте, эсĕ мана çичĕ ыйту панă пулсан та эпĕ пĕр хурав, пĕр сăмах калăттăм.

Асатте. Мĕн каланă пулăттăн?

Мăнук. Чи илемли, чи янăравли, чи çепĕççи, чи пуянни, чи хăватли, чи ăшши, чи юратни – тăван чĕлхе!

Вĕрентекен.

Ачасем! Чĕлхемĕр пулсан – (*пурте*) эпир пуян,
Чĕлхемĕр пулсан – (*пурте*) эпир патвар,
Чĕлхемĕр пулсан – (*пурте*) эпир мăнаç,
Чĕлхемĕр пулсан – (*пурте*) эпир хастар!

Уяв вĕçĕнче пурте пĕрле «Илемлĕ, илемлĕ» юрра шăрантараççĕ.